Паян – Пĕтĕм тĕнчери театр кунĕ

Çынсене савăнăç парнелеççĕ

Кашмашри Культура çурчĕ çумĕнче театр коллективне йĕркелени 14 çул çитрĕ. Çак тапхăрта спектакльсемпе хăш-хăш яла, хăш-хăш района кăна çитмен-ши? Ялти артистсен пултарулăхпа ăсталăх шайĕ ӳссе пыни те савăнтарать. Ахальтен мар ĕнтĕ театра 2005 çулта халăх коллективĕн ятне панă.

Çавна та палăртса хăвармалла. Спектакльте выляканcен шучĕ 20 çынран та иртет. Ялан шутланса тăраканнисем 17 çын. Çитменнине коллектив кашни çулах çынсем умне çĕнĕ спектакльпе тухни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Акă иртнĕ çул Н. Сидоровăн «Хусах Ваççа авланать» пьеси тăрăх хатĕрленĕ спектакльпе çынсене савăнтарнă. Кăçал вара Кашмашсем Н. Угаринăн «Çăлтăрсем вăйăа тухсан» пьесине сцена çине кăларма кăмăл турĕç.

Каларăмăр ĕнтĕ, коллектив район тăрăх кăна çӳремест. Кашмашри халăх театрĕн ушкăнне ытти районсенче те хапăл туса йышăнаççĕ. Акă нумай пулмасть вĕсем хăйсен спектаклĕпе Етĕрне районĕнче пулчĕç.

Рольсене ăста та çынсене çывăх, ĕнентерӳллĕ выляма ял артисчĕсене пултарулăх шайĕ пысăк пулни те май парать. Чылайăшĕ вĕсенчен пĕрремĕш çул мар ĕнтĕ сцена çинче хăйĕн пултарулăхĕпе ял çыннисене савăнтарать. Кунта чи малтанах Тамара Леонидовна Цвыгана, Галина Павловнапа Николай Алексеевич Ершовсене, Елена Алексеевна Тихонована, Петр Вячеславович Борзаева, Виталий Варфоломеевич Александрова, Наталия Михайловна Ердукована, ĕç ветеранне Вячеслав Федорович Широкова тата ыттисене ырă енчен асăнмалла. Тĕрĕссипе вĕсем çинче тытăнса тăрать те ĕнтĕ театр.

Паллă ĕнтĕ, хальхи вăхăтра вырăнсене спектакльпе тухса çӳреме те майĕсем сахалрах. Пĕтĕмпех укçа-тенкĕпе çыхăннă. Апла пулин те Кашмашри халăх театрĕн коллективĕ малашне те пире хăйĕн пултарулăхĕпе савăнтарĕ.

В. ЛЕОНИДОВ.

Сăн ӳкерчĕкре: спектальти пĕр сцена.

Ыйту – хурав

Камсем тивĕçеççĕ пĕр хут тӳлеве?

Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитнĕ май граждансен уйрăм категорийĕсене пĕр хутчен укçан парса пулăшма шантарнăччĕ. Камсем тивĕçĕç ăна тата мĕнле сумма пирки сăмах пырать?

В. ИВАНОВА.
Муркаш ялĕ.

РФ Пенси фончĕн районти управленийĕнчен кун пирки çакăн пек хурав илтĕмĕр: 2010 çулхи февралĕн 24-мĕшĕнче РФ Президенчĕ «О единовременной выплате некоторым гражданам Российской Федерации в связи с 65-летием Победы в Великой Отечественной войне 1941–1945 годов» 247 № Указ йышăннă. Унта çак тӳлевсене камсем илессине тата унăн суммисене палăртнă.

Хальхи вăхăтра Аслă Отечественнăй вăрçă инваличĕсем 32 çын тата Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсем 79 çын шутланаççĕ. Вĕсене пурне те 5-шер пин тенкĕ пĕр хутчен тӳлĕç. «Жителю блокадного Ленинграда» знака тивĕçнисене те 5000 тенкĕ тӳлеççĕ. Кун пекки районта 1 çын. Финляндипе, Японипе пынă çапăçусенче, Аслă Отечественнăй вăрçăра çапăçса вилнĕ салтаксен тăлăх арăмĕсене те 5-шер пин тенкĕ тӳлеççĕ. Районта кун пеккисем 19 çын. Аслă Отечественнăй вăрçă хыççăн çĕре кĕнĕ участниксемпе инвалидсен тăлăх юлнă мăшăрĕсем те 5000 тенкĕне тивĕçĕç. Вĕсем вара районта 364 çын.

Пĕр хут тӳлемелли граждансен ытти категорийĕсене те пăхса хунă. Сăмахран, 1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнчен тытăнса 1945 çулхи майăн 9-мĕшĕччен тылра 6 уйăхран кая мар ĕçленисене (СССР-ăн вăхăтлăх оккупациленĕ территорийĕсенче ĕçлени шута кĕмест, 1283 çын), Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче хастар ĕçленĕшĕн СССР орденĕсемпе медалĕсене илме тивĕç пулнисене (79 çын) 1000-шер тенкĕ парĕç.

Малтан палăртнă тăрăх, Чăваш Республикинче апрель уйăхĕнчи пенсипе пĕрле Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çитнĕ ятпа пĕр хут паракан хушма тӳлеве 54 пин çын илĕ. Пĕтĕмĕшле сумма 104 миллион тенкĕпе танлашать. Ведомствăсем урлă 602 çар пенсионерĕ пенсипе пĕрле хушма тӳлев илет. Хальхи вăхăтра списоксем хатĕрлес тата кирлĕ укçа-тенкĕне уйăрас енĕпе ĕçсем пыраççĕ. Пĕр хут паракан укçа тӳлевне илме заявлени çырма та, хушма документсем хатĕрлеме те кирлĕ мар.

Ĕç сыхлавĕн ыйтăвĕсемпе

Хамăр тивĕçе пурнăçлама укçа кирлĕ мар

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

– Ĕç условийĕсене лайăхлатассине тата ĕç сыхлавĕн ыйтăвĕсене мĕнле йĕркелесе пыратăр?

– Çак ыйтусем Патшалăх влаçне, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене, ĕç паракансемпе ĕçлекенсен пĕрлешĕвĕсене пĕр-пĕринпе тачă çыхăнура ĕçлеме хистеççĕ. Ку тĕлĕшпе юлашки çулсенче районта та ĕç сыхлавне йĕркелесе ертсе пырас тĕлĕшпе муниципаллă система туса хутăмăр. Çапла майпа ку енĕпе пĕтĕм ĕçе патшалăх надзорĕн тата тĕрĕслевĕн органĕсемпе, ĕç паракансен тата ĕçлекенсен пĕрлешĕвĕсемпе пĕрле килĕшӳ туса пурнăçласа пыратпăр. Ĕç сыхлавĕпе Координаци Канашĕ те тĕрлĕрен мероприятисем ирттерет. Районта ĕç условийĕсене лайăхлатассипе тата ĕç сыхлавĕпе тĕллевлĕ программа йышăннă. Вăл мĕнле пурнăçланса пынине ĕç сыхлавĕн инженерĕсемпе тата Координаци Канашĕн членĕсемпе пăхса тухатпăр.

Ĕç хутшăнăвĕсемпе тата ĕç сыхлавĕпе ĕçе вăйлатмалли тепĕр мел вăл – социаллă партнерлăх системине туса хуни. Иртнĕ çул пирĕн районта социаллă тата ĕç хутшăнăвĕсене йĕркелекен территори комиссийĕ ĕçлерĕ. Вăл вырăнсенчи социаллă пурнăçпа экономика политикине палăртакан территори Килĕшĕвне туса вăл мĕнле пурнăçланнине тĕрĕслесе тăчĕ, пур харпăрлăх формиллĕ предприятисенче те коллективлă договорсем йышăнасссине пăхса тăчĕ.

Районти социаллă тата ĕçлĕ хутшăнусене йĕркелесе пыракан виçĕ енлĕ комисси çак Килĕшӳ мĕнле пурнăçланнине, районта социаллă лару-тăрупа çыхăннă ыйтусене, социаллă тата ĕç хутшăнăвĕсемпе кирлĕ мерăсем йышăнассине, профсоюзсен, ĕç паракансен пĕрлешĕвĕсемпе массăллă информаци хатĕрĕсемпе, территори комиссийĕсемпе çыхăну йĕркелессине пысăк тимлĕх уйăрчĕ. Социаллă партнерлăх çинчен Килĕшĕве иртнĕ çулхи майăн 29-мĕшĕнче йышăннăччĕ.

Чăваш Республикин «Социаллă партнерлăх çинчен» саккунĕпе килĕшӳллĕн пур харпăрлăх формиллĕ предприятисенче те коллективлă договор йышăнса вĕсене регистрацилессипе ĕçленĕ. Пĕтĕмпе 49 килĕшӳ туса регистрациленĕ.

Коллективлă договорсенчен 75 процентне патшалăх тата муниципаллă харпăрлăх формиллĕ организацисенче тунă, 25 процента яхăн – уйрăм çынсен тата хутăш харпăрлăх формиллĕ предприятисенче. Сывлăх сыхлавĕн, вĕрентӳ учрежденийĕсем пĕтĕмпех, промышленноç предприятийĕсенчен 80, ял хуçалăх предприятийĕсенчен 60 проценчĕ колективлă договорсем тунă. Пĕчĕк бизнес предприятийĕсенче вара ку ĕç самаях уксахлать.

Çав вăхăтрах йышăннă коллективлă договорсен содержанийĕпе структурин пахалăхĕ лайăхланчĕ. Вĕсенче палăртнă социаллă гарантисен шайĕ хăпарчĕ.

Кашни уйăхри планпа килĕшӳллĕн надзор тата тĕрĕслекен органсен представителĕсемпе пĕрле предприятисемпе организацисене вырăна тухса практика тата методика пулăшăвĕсене паратпăр. Иртнĕ çул 62 хутчен тухнă вырăнсене.

«Республикăри ĕç сыхлавĕн центрĕ» патшалăх учрежденийĕпе пĕрле ертӳçĕсемпе специалистсене валли 40 сехетлĕ Программăпа вĕренӳ йĕркеленĕ. 42 ертӳçĕпе специалист вĕренчĕ унта.

– Эсир вырăна тухса çӳретпĕр, терĕр. Хăш предприятисенче мĕнле лару-тăру?

– Предприятисенче 50 ытла çын ĕçлет пулсан, вĕсенче ĕç сыхлавĕн инженерĕсем пур. Ку ыйтупа çыхăннă ĕçсене вĕсем туса пыраççĕ: ĕç сыхлавĕн кунĕсене, ĕç условийĕсене лайăхлатмалли уйăхлăхсем, хăрушсăрлăх ыйтăвĕсемпе вĕренӳ йĕркелеççĕ, çынсене медосмотра тăратасси те вĕсен тивĕçех.

Шел пулин те, пур специалист та хăйĕн тивĕçне кирлĕ пек пурнăçлать теме çук-ха: «Сеятель», Ленин яч. хис., «Чемеево», «Рассвет» АФ чикĕллĕ яваплăхлă общество. Çав хушăрах «Герой» хуçалăхран, «Сундырь-Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă обществăран, «Муркашри сĕт-çу завочĕ» акционерсен уçă общественчен тĕслĕх илмелли те чылай. «АлАн» чикĕллĕ яваплăхлă обществăра, Мăн Сĕнтĕрти тата Муркашри пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăхсенче, Е.Андреев яч. хис. хуçалăхра ку енĕпе тата та хытăрах ĕçлеме пуçларĕç.

– Ĕç вырăнĕнче инкексем вара пулмаççĕ мар. Иртнĕ çул ку енĕпе мĕнлерех пулчĕ лару-тăру?

– Иртнĕ çул производствăра 5 çын инкеке лекрĕ. Вĕсенчен пĕрин кун-çулĕ татăлчĕ, тепĕр иккĕшĕ йывăр сусăрăнчĕç, тата тепĕр иккĕшĕн суранĕсем çăмăл пулчĕç. Ку инкексем «Сеятель», Чапаев яч. хис., Ильич яч. хис., «Оринино», «Муркаш районĕнчи выльăх-чĕрлĕх чирĕсемпе кĕрешекен станци» патшалăх учрежденийĕнче пулчĕç.

Пĕтĕмĕшле илсен, районта производствăри инкексен йышĕ чакса пырать, апла пулин те ку лăпланмалли сăлтав мар. Хăвăрах куратăр, инкексем тĕл пулсах тăраççĕ. Сăлтавĕсем вара тĕрлĕ ĕç тунипе, специалистсен яваплăхĕпе, ĕçлекенсене ĕç сыхлавĕн правилисене тата ĕçе хăрушсăр меслетпе пурнăçлама вĕрентменнипе, шалти йĕркен правилисене пăхăнманнипе çыхăннă.

– Профессипе çыхăннă чирсемпе чирлесе кайнă тĕслĕхсем пулман-и?

– Иртнĕ çул учета илнĕ 28 çынран 1 çынна тупса палăртнă, виçĕм çул – учета илнĕ 31 çынран – 3 çынна. Кăтарту чакнине, паллах, ĕç условийĕсене лайăхлатнипе кăна çыхăнтарни тĕрĕс мар пулнă пулĕччĕ. Професси тĕлĕшĕнчи тарăна кайнă чирсен хушшинче ытларах тĕревпе хускану аппарачĕн, сывлав органĕсен, чĕтреннин чирĕсем тĕл пулаççĕ. Профессисемпе илес пулсан, выльăх-чĕрлĕх пăхакансем, механизаторсем, водительсем ытларах чирлеççĕ. Иртнĕ çул 2095 çын медосмотр витĕр тухнă. Ку вăл ун витĕр тухмалли çынсен 98,8 проценчĕ пулать. Пуçламăш медосмотра 189 çын тухнă.

– Юлашки вăхăтра ĕç вырăнĕсене аттестацилесси практикăна кĕрсе пырать. Кун пирки мĕн каланă пулăттăр?

– Иртнĕ çул ку ĕçе Муркаш райповĕ, «Моргауши–Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă общество, Вязов уйрăм предприниматель, «Моргаушимежрайгаз» филиалĕ туса ирттерчĕç. Ытти предприятисенче ку ыйту çине çаврăнса та пăхасшăн мар. Ку ĕçе туса ирттересси вăл ертӳçĕ ĕç условийĕсене тата ĕç сыхлавне лайăхлатассипе кăсăкланнипе çыхăннă. Производствăри инкексенчен, професси чирĕсенчен обязательнăй йĕркепе страхласси кĕрет кунта. Ĕç вырăнĕсене аттестацилесе ĕç условийĕсене лайăхлатнă предприятисем производствăри инкекпе професси чирĕсенчен социаллă страхлассин тарифĕсене пĕчĕклетнипе предприятин укçи-тенкине 40 процент таран перекетлеме пултараççĕ ку тĕлĕшпе.

Юлашки вăхăтра тата халиччен усă курман мел те пур: ĕç вырăнĕсен мониторингне ирттересси çинчен сăмах пырать кунта. Ăна ĕç вырăнĕсене аттестацилесси результатне кура ирттереççĕ, ун хыççăн электронлă майпа «Сывлăх паспортне» йĕркелеççĕ.

50 ытла çын ĕçлекен предприятисенчен 19-шĕнче ĕç условийĕсене кура ĕç вырăнĕсен мониторингне ирттернĕ.

Çаксем, паллах, йăлтах ĕç сыхлавĕ çине ытларах укçа-тенкĕ каяссипе çыхăннă. Апла пулин те, производствăра пулса иртекен инкексем ытларах йĕркелӳ ĕçĕсене кирлĕ пек туманнипе çыхăннă. Ĕçе пĕлсе йĕркелеме, ĕç дисциплинине çирĕплетме, должноçри çынсене хăйсен тивĕçĕсене кирлĕ пек пурнăçлама укçа кирлĕ мар вĕт.

Сăмахăма вара çак шухăшпа вĕçлес килет: ĕç сыхлавĕн ыйтăвĕсемпе ертӳçĕсемпе те, ĕçлекенсемпе те вĕренӳ ирттерни çав тери пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ку енĕпе уйрăмах Ильич яч. хис.,«Ударник», «Муркаш районĕнчи выльăх-чĕрлĕх чирĕсемпе кĕрешекен станци» патшалăх учрежденийĕ, Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр райповĕсем, вĕрентӳ тата сывлăх сыхлавĕн учрежденийĕсем лайăх ĕçленине палăртмалла. Ку ĕçе кăçал та малалла тăсатпăр. Пурĕ 2010 çулта 121 ертӳçĕпе специалиста вĕрентме палăртнă. Ку ĕçе пурнăçлама ĕлкĕртĕмĕр та ĕнтĕ.

Л. ПАВЛОВА
каласнă.

Район администрацийĕн кунĕнчен

Йывăрлăхсене пĕрле çĕнтерме тăрăшмалла

Район администрацийĕн черетлĕ кунĕ мартăн 18-мĕшĕнче Катькас ял тăрăхĕнче иртрĕ. Район администрацийĕн, федераллă службăсен районти уйрăмĕсемпе пайĕсен ответлă ĕçченĕсем малтанах ял тăрăхĕн территорийĕнче вырнаçнă экономика, вăтам тата пĕчĕк предпринимательство объекчĕсенче, суту-илӳ предприятийĕсенче, вĕрентӳ, культура тата сывлăха сыхлас ĕç учрежденийĕсенче пулса курчĕç, ăнăçсăр шутланакан семьесене çитрĕç. Кунпа пĕрлех ял тăрăхĕн администрацийĕнче РФ Пенси фончĕн, районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ответлă ĕçченĕсем çынсене хăйсене интереслентерекен ыйтусемпе йышăнчĕç. Кайран вара Яракри Культура çуртĕнче район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов ял тăрăхĕн территорийĕнче пурăнакансемпе тĕл пулу ирттерчĕ, тыл ĕçченĕсене савăнăçлă лару-тăрура Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитнине халаллана юбилей медалĕсене пачĕ.

Тĕрĕссипе калас пулсан, Катькас ял тăрăхĕ – районта чи пысăккисенчен пĕри. Пĕтĕмĕшле çĕр лаптăкĕ 6638 гектар йышăнать. Ку территорире 4 шкул, Культура çурчĕсемпе клубсем 7, библиотекăсем 4, Мăн Сĕнтĕр райповĕн 10 магазинĕ, 3 фельдшер пункчĕ, пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисĕ вырнаçнă. Çавна май татса памалли ыйтусем те сахалах мар.

Хальхи вăхăтра кирек епле ĕçе туса ирттересси те укçа-тенкĕпе çыхăннă. Апла пулин те иртнĕ çул ялсенче тирпейилем ĕçĕсене 1 миллион та 816 пин тенкĕлĕх туса ирттерме май килнĕ. Вăл шутран ялсенчи çулсене кирлĕ шайра тытса тăма, юсав ĕçĕсем туса ирттерме, урамсене электричествăпа тивĕçтерме тата ытти тĕллевпе усă курнă. Катькас ялĕнче 200 метр, Çеçмер ялĕнче 250 метр, Чурикасси ялĕнче 350 метр çулсене юсанă.

Катькасра Пушкин, Новая, Центральная, Ягодная урамсенче асфальт сарма проектсем туса хатĕрленĕ. Кунта В.Н. Волкова старостăна лайăх енчен палăртса хăвармалла.

Охтикасси ялне газ пăрăхĕсем хурса хăварнă. Май уйăхĕнче ку ялта та газ пулĕ. Катькасра пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисне, Яракра Культура çуртне хута яма пултарнă.

Хăйсен çĕр пайĕсене харпăрлăха куçаракансем çук мар. Кун пеккисем паянхи куна 550 çын. Татах 50 çын çĕр пайĕсене харпăрлăха илме кăмăл тунă. Апла пулин те усă курман çĕр лаптăкĕ 350 гектарпа танлашать. Анчах та çĕре харпăрлăха илни пĕр ĕç, унпа пĕлсе, тĕллевлĕ усă курасси пирки те шухăшлас пулать. Пĕр гектар çĕр те усăсăр выртмалла мар.

Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем арканни, вырăнта ĕç тупма йывăр пулни преступленисем тăвасси ӳсесси çине те витĕм кӳрет. Ял тăрăхĕн территорийĕнче 2008 çулта 47 преступлени регистрациленĕ пулсан, иртнĕ çул ку хисеп 56-на çитнĕ.

Район администрацийĕн кунĕнче çакă та палăрчĕ. Хальхи вăхăтра ялсенче эрехпе туслă семьесем те сахал мар. Вĕсем хушшинче вара çамрăксем те, хĕрарăмсем те пур.

Демографи тĕлĕшĕнчи лару-тăру та кирлĕ шайра теме çук. Акă иртнĕ çулхи кăтартусем: пĕтĕмпе 58 çын вилнĕ, çуралакансем вара 18 ача пулнă.

Çапах та паллă – йывăрлăхсем умĕнче пуç усма кирлĕ мар. Нихăçан та йывăрлăхсемсĕр пулман. Вĕсене çĕнтерсе пыма пĕлес пулать. Çавăн чухне кăна малашлăх илемлĕрех те илĕртӳллĕрех, шанчăклăрах пулĕ. Çапла палăртрĕç ял çыннисем район администрацийĕн кунĕнче.

В. ШАПОШНИКОВ.